чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

167/26573/ № 27 Юн кун, 2014, çурла (август), 27 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Сывлăхшăн пĕрлехи юхăма пĕрлешеççĕ

***Чăваш Республикин кашни муниципалитет пĕрлешĕвĕ хăйĕн сывлăх профильне хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлĕ. Çакăн пек тĕллев лартнă районсемпе хуласен пуçлăхĕсен умне республика ертӳлĕхĕ.***

Кăçалхи утă уйăхĕн 31-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев халăх сывлăхне çирĕплетес тата пурнăç пахалăхне ӳстерес енĕпе пурнăçламалли хушма мерăсем çинчен Указ алă пусса çирĕплетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикинчи халăх сывлăхне сыхлас ыйтусемпе Правительство комиссийĕ туса хунă. Комисси тытăмĕнче – патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çыннисем. Вăл отрасльсемпе çыхăну тытса Чăваш Республикин сывлăх профильне хатĕрлеме тĕллев лартнă. Тĕрĕс апатлану, экологи хăрушсăрлăхĕ, таса шывпа сывлăш, аманса сусăрланассинчен, çав шутра çулсем çинче те асăрханасси, спиртлă продукцие сахалрах сутасси, ĕç вырăнĕнче сывлăха сыхласси, инвалидсене çӳремешкĕн йĕркеллĕ условисем туса парасси, спортăн массăллă енĕсене аталантарасси – çак тата ытти ыйту тĕп вырăнта пулĕç.

Кунашкал сывлăх профилĕсене Чăваш Енри районсемпе хуласем валли те хатĕрлĕç. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çумĕнчи халăх сывлăхне сыхлас тата çирĕплетес ыйтусемпе ĕçлекен канашсем ку енĕпе хастарлăх кăтартĕç. Вĕсен тĕллевĕ – территори уйрăмлăхĕсене тишкересси, çынсен сывлăхне мĕн лайăх, мĕн начар витĕм кӳнине палăртасси. Çакна тĕпе хурса демографи вăй-хăватне, халăх йышне сыхласа хăварас, çынсем вилнине чакарас тата пурнăç пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе муниципалитета аталантармалли план палăртĕç. Хамăр пурăнакан сывă вырăна йĕркелес ĕçе ахаль граждансене те явăçтарĕç.

Палăртса хăвармалла: юлашки çулсенче Чăваш Енре ача çураласси ӳсет, çын вилнин шайĕ чакать. 2013 çулта пурнăç тăршшĕ 70,79 çул пулнă /Раççейре – 70,77 çул/. Чăваш Енри халăх сывлăхĕн тĕп кăтартăвĕсем йĕркеллех, анчах та халăха диспансеризацилемелли программа кăтартнă тăрăх – вăраха кайнă, ермен чирсем анлăн сарăлни палăрнă. Çак ушкăнта – чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсем, сахăр диабечĕ, сывлав, апата ирĕлтерекен органсен чирĕсем, шыçăсем, урăхла каласан – тĕрĕс мар пурнăç йĕркипе çыхăннă чирсем. Вăрттăнлăх мар ĕнтĕ: Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлавĕн организацийĕ пĕлтернĕ тăрăх – сывлăх сыхлавĕн тытăмĕ халăх сывлăхне 10% кая мар тӳпе хывать. Çав вăхăтрах çынсен пурнăç условийĕсемпе йĕрки, тăван тавралăх сывлăха 80% таранччен витĕм кӳреççĕ.

Инфекциллĕ мар чирсем çынран çынна куçмаççĕ, часчасах эпир вĕсене хамăрта хамăрах ӳстеретпĕр. Хамăрăн сывлăха сыхламашкăн тĕрĕс апатланма, табак туртмасăр, ĕçкĕпе иртĕхмесĕр пурăнма, физкультурăпа, спортпа туслашма пултаратпăр.

**А.ЛЬВОВА**

## Воспитани ыйтăвĕсемпе

***Федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен ертӳçисен çумĕсемпе Самар облаçĕнчи Тольяттире ирттернĕ «Çавра сĕтелĕн» икĕ кунлăх ларăвне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов хутшăннă.***

Ларура çар-патриот воспитанийĕ парас, кадет корпусĕсен воспитанникĕсен хушшинче тĕл перекенсен спортне аталантарас ыйтусене тишкернĕ. РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн çумĕ Олег Мельниченко тĕрлĕ хĕç-пăшалпа усă курма пĕлни çыннăн дисциплинине ӳстернине, вăл усăллă тата кăсăклă хăнăху пулнине тата ăна çар-патриот воспитанийĕн палли пек усă курма вăхăт çитнине палăртнă. Чăваш Ене илес тăк, кунта тĕл пемелли спорт лайăх аталанать.

Вĕренӳпе методика сборне округри кадетсен тăвата вĕренӳ заведенийĕн воспитанникĕсене чĕннĕ. Раççейри тĕл перекенсен федерацийĕн тĕп канашĕн председателĕ Анатолий Кондрух «Çавра сĕтелĕн» асăннă ларăвне ахальтен мар Самар облаçĕнче ирттерни çинчен каланă: çак тапхăрта Тольяттире пистолетран тĕл перекенсен Раççей чемпионачĕ пынă, унта 300 ытла спортсмен тупăшнă.

**А.СТЕПНОВ.**

*Ял хуçалăхĕ*

# Пĕр-пĕрне пулăшса – çĕнĕ çитĕнӳсем патне!



***Пирĕн республикăра «Агропромышленноç комплексĕн ветеранĕсен союзĕ» общество организацине йĕркеленĕренпе икĕ çул та çитмен-ха, анчах вăл кĕске вăхăтрах хăйĕн тăрăшулăхĕпе тата пуçарулăхĕпе палăрма ĕлкĕрчĕ. Тахçанах кĕмĕлленнĕ çӳçлĕ ветерансене пĕрлештерекен ушкăн республика ертӳлĕхĕпе, ЧР Патшалăх Канашĕпе тачă çыхăнса ĕçлет. Общество организацийĕн правленийĕ яллă районсене тухса аграри тытăмĕнче вăй хуракансен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашать.***

Çурла уйăхĕн 22-мĕшĕнче АПК ветеранĕсем Вăрнар тăрăхне йышлăн килсе çитрĕç. Вĕсен шухăшне ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов ырласа йышăннă. Юрий Алексеевич яллă вырăнсен социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантармалли тĕп çулйĕрсен ыйтăвĕсем тăрăх çакăнта ирттерме палăртнă канашлăва аграри ветеранĕсене те явăçтарма тĕллев тытнă.

Патшалăх Канашне ертсе пыма çирĕплетиччен «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ» АУО гендиректорĕнче ĕçленĕскер канашлу уçăличчен республикăн пур районĕнчен те килнĕ çынсене агрохолдингăн Малтикас Ялтăрари выльăхчĕрлĕх комплексне çитсе курма сĕннĕ. Район центрĕнчен 20 çухрăмри чăваш ялĕнче вырнаçнă сĕт-çу фермине çитсенех пенсионерсем хăйсен тĕлĕнĕвне пытараймарĕç. Комплексра майракаллă шултра ĕне-выльăх 2 пин пуç ытла пулни, çав шутра сăвакан 830 пуç ĕнене пĕтĕмпе те 5 оператор çеç суни ăçтан тĕлĕнмелли пулăм ан пултăрха?

Витере хальхи йышши электрон хатĕрсемпе усă курни ĕç вăйне чакарма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшнипе пĕрлех туса илекен продукци пахалăхне лайăхлатма май панă. Предприяти шанчăклăнах ӳсĕм çулĕ çине тăни куç кĕрет. Вăл малаллах аталанать, хăйĕн хăвачĕсене сарса пырать. Йышлă выльăха хупса усрама çирĕп те тăн-тăн витесем тата рациона тутлăхлă япаласемпе пуянлатнă апат сывлăш пекех кирлине асра тытать дирекци. Николай Аливанов генеральнăй директор каланă тăрăх – çывăх вăхăтрах самăртакан вăкăрсене хупма 300 вырăнлă çĕнĕ вите ĕçе кĕмелле. Ăна çăмăл тытăмпа тума патшалăхран пĕр пус та илмен, йăлтах – комбинат шучĕпе.

Аш-какай комбиначĕн куккурус пуссине çитсен те тĕлĕнмелли тупăнчĕ. Тахçан манăçа кăларнă «уй-хир пикине» еплерех хаклаççĕ Вăрнарсем! Республикăра вĕсем çак культурăна тĕш тырă технологийĕпе чи малтан çитĕнтерме тытăннă. Кăçал ăна 1300 гектар çинче акса хăварнă. Куккурус тунисем çирĕп те парка, пуçĕсем тулса-пиççе çитнĕпе пĕрех, лайăх шĕкĕлченеççĕ. Çӳллĕшĕ 3 метр патнех çитет.

Комбинат сысна ĕрчетекен «Колос» комплексăн темиçе çул каялла панкрута тухнă çурчĕсене те иккĕмĕш пурнăç панă. Аграри ветеранĕсем унта та кĕрсе тухрĕç, евроюсав кӳнĕ çĕнĕ сăнсене курса савăнчĕç.

«Эпĕ колхоз ертӳçинче ĕçленĕ чухне сехетре 5 тонна тырă типĕтекен агрегатпа усă кураттăмăр. Кунта вара çак вăхăтра – 50 тонна. Мĕнешкел хăват!» – хавхаланса калаçать Йĕпреç районĕнчи «Красный фронтовик» хуçалăх лавне пĕр улшăнмасăр 17 çул туртса пынă Алексей Кузьмин. «Паянхи ял хуçалăхĕнче те ырă улшăну темĕн чухлех иккен», – килĕшет унпа Канаш тăрăхĕнчи «Канаш» колхоз пуçĕнче тăнă Валерий Долгов.

**Чунĕсене савăк туйăмсемпе хавхалантарма пулăшнă çул çӳрев хыççăн ветерансем Вăрнар район администрацийĕн ларусен залне пухăнчĕç. Ку вăхăт тĕлне ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов ертсе пыракан ушкăн та Шупашкартан килсе çитрĕ. Парламент спикерĕ канашлăва уçса пурне те Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев янă салама çитерчĕ. «Эсир хăй вăхăтĕнче аграри тытăмĕн явапллă вырăнĕсенче тăрăшнă, – терĕ малалла Юрий Алексеевич. – Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн та ахаль ларас шухăшпа кăна йăпанса пурăнмастăр. Сирĕн пуян опытăр, ăсталăхăр паянхи çамрăксемшĕн питех те вырăнлă. Эпир – сирĕн вĕренекенĕрсем. Сире халĕ те пире вĕрентсе пынăшăн, тăван çĕре юратса хисепленĕшĕн пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватăп».**

Юрий Попов савăнăçлă лару-тăрура чи тивĕçлисене «Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ: 20 çул» асăну медалĕсем пачĕ. Ку наградăна илнисен хушшинче хăй вăхăтĕнче парти райкомĕсене, халăх депутачĕсен район Канашĕсен ĕçтăвкомĕсене ертсе пынă.

● ➡ 2 стр.

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Муфтие тав тунă

***Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров Мускав тата тĕп регион муфтийĕпе, Раççей Федерацийĕн Общество палатин членĕпе Альбир Кргановпа тата Чăваш Республикинчи мăсăльман тĕнĕн управленийĕн пуçлăхĕпе Мансур Хайбулловпа тĕл пулнă.***

Ĕçлĕ калаçура нацисен тата конфессисен хушшинчи хутшăнăвĕсем çинчен сăмах пынă. Альбир хазрат прихутсенчи общество канашĕсен ĕç-хĕлĕпе, социаллă тата культура проекчĕсем мĕнле пурнăçа кĕнипе паллаштарнă. Тĕп инспектор муфтие ислам тĕнне аталантарма тăрăшнăшăн тав тунă, халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма ăнтăлни, нацисен тата конфессисен хутшăнăвĕсем лайăхланса пыни тăнăç пурнăçшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă.

**Ю.ПЕТРОВ.**

### Николай Угаслов Бобровсене çурт парнеленĕ

***Иртнĕ шăмат кун Етĕрне хулин кунĕ иртнĕ. Унта хула çыннисем çеç мар, район ĕçченĕсем те хутшăннă. Вăйă-кулă, юрă-ташă иртен пуçласа каçченех янăранă хулара.***

Çак кун Кăмаккассинчи Маринăпа Анатолий Бобровсемшĕн акă хăш енĕпе яланлăхах асра юлнă: вĕсем çĕнĕ, икĕ хутлă кирпĕч çуртăн хуçисем пулса тăнă. Мĕнле майпа-ха?

Бобровсем – нумай ачаллă çемье (пилĕк ача, улттăмĕшне кĕтеççĕ). Вĕсен хăйсен çурчĕ пулман, çывăх тăванĕсем патĕнче пурăннă, Кивĕ Тинкеш ял тăрăхĕнче пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе черетре те тăнă. Пысăк йышлă çемьене кĕтмен-туман çĕртен телей кӳрекенĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «ТУС» строительство фирмин генеральнăй директорĕ, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ, Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕ Николай Угаслов. Николай Федоровичăн Етĕрне районĕнчи Анат Ачакра çурт пулнă. Шăпах çавăн уççине парнеленĕ те вăл Бобровсене Етĕрне хулин кунĕнче.

**Н.СМИРНОВА.**

### Тăрăшуллă ĕçĕн паха кăтартăвĕ

***РФ Центросоюзĕн Канашĕн Президиумĕ 2014 çулхи II кварталшăн потребительсен обществисен регионсенчи союзĕсен хушшинче Пĕтĕм Раççейри «Ĕçлекен отрасльсене ăнăçлă аталантарнăшăн» ăмăртăва пĕтĕмлетнĕ.***

Пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле, вак суту-илĕве, производство тата хатĕрлев отраслĕсене аталантарнăшăн Чăвашпотребсоюза пĕрремĕш вырăн панă, общество апатланăвне аталантарнăшăн – иккĕмĕш, федерацин Атăлçи округĕ тăрăх пĕтĕмĕшле ĕçе аталантарнăшăн – пĕрремĕш вырăн.

Центросоюз тытăмĕнчи потребкооперацин кооператив организацийĕсен хушшинчи Пĕтĕм Раççейри экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх I çур çулшăн пĕтĕмĕшле ĕçе аталантарнăшăн Муркаш райпоне – пĕрремĕш, Çĕрпӳ райпоне – виççĕмĕш вырăнсемпе наградăланă, вак суту-илĕве аталантарнăшăн Муркаш райповĕ пĕрремĕш вырăна тухнă, общество апатланăвĕпе Элĕкпе Муркаш райповĕсем малта.

Хатĕрлев енĕпе пур вырăна та районсенчи потребительсен обществисем йышăннă: Элĕк, Çĕрпӳ, Муркаш районĕсем. Чăвашпотребсоюз организацийĕсем ытти енĕпе те çĕнтерӳçĕсен йышĕнче.

Çакă – потребкооперации ертӳçисем, нумай пинлĕ коллектив пĕрле тăрăшса ĕçленин паха кăтартăвĕ. Коллектив Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывать.

**В.НИКОЛАЕВ.**

### Вĕренӳ уçлăхне музейсем анлăлатаççĕ

***Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Çурла уйăхĕн 25-26–мĕшĕсенче Чăваш наци музейĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем тата пуçламăш классен учителĕсем валли семинар иртрĕ.***

Килес çула республикăра Константин Иванов çулталăкĕ тесе йышăннă. Çавна май тăван чĕлхепе, литературăпа шкулсенче пĕлӳ паракансем хăйсен ĕç планне пуянлатни вырăнлă. Асăннă семинарта педагогсем ачасене ăс-хакăл воспитанийĕ парассине тĕрлĕ меслетпе йĕркелени витĕм кӳнине çирĕплетрĕç.

«Чăваш чĕлхи çĕр çинчен ан çухалтăр тесен хамăртан мĕн килнине йăлтах пурнăçламалла. Пирĕн музейра тата унăн виçĕ филиалĕнче вĕренӳ ĕçне пулăшу кӳрекен пуянлăх нумай. Ачасемпе тĕрлĕ заняти чылай иртет», – вĕрентекенсене çыхăну тытма йыхравланă май палăртрĕ Чăваш наци музейĕн директорĕ Ирина Меньшикова.

**В.МИРСКАЯ.**

### Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, çумăр çумасть. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 21, çĕрле 15 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 749 мм, сывлăшри нӳрĕк 36 процент.

**Кун тăршшĕ 14 сехет те 13 минут.**

Ыран улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, çумăр çăвать. Çил кăнтăртан 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 16, çĕрле 12 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 746 мм, сывлăшри нӳрĕк 82 процент.

**Кун тăршшĕ 14 сехет те 09 минут.**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ



# ЧĂВАШ ТУЙĂМЛАХ ПУЛТĂРЧЧĔ

**95 çул каялла Владимир Ленин «Кино-тата фотопромышленноçа национализацилесси çинчен» Декрета алă пуснă. Паллă çак куна, çурла уйăхĕн 27-мĕшне, Раççейре Кино кунĕ пек уявлама йышăннă.**

**Чăваш Республикинче наци кинопроизводстви иртнĕ ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсен чиккинче аталанма пуçланă. Кино чăваш халăх культурин тата çутлăхĕн çĕкленĕвĕнче çĕнĕ пусăм пулса тăнă. Унăн историйĕн пуçламăшĕ Иоаким Максимов-Кошкинский тата Тани Юн ячĕсемпе тачă çыхăннă. Вĕсем çĕр-шыв çĕнĕ самана йывăррăн уралаңнă вăхăтра театр, кино ĕçне йĕркелеме, паян та калаçтаракан ĕçсем хатĕрлесе хăварма пултарнă.**

**XXI ĕмĕре çитрĕмĕр пулин те чăваш киновĕ çӳллĕ шая çĕкленнĕ теме иртерех-ха. Республикăра ку енĕпе ĕçлекен, халăха килĕшекен фильмсем ӳкерекен çук мар. Çав вăхăтрах аталанăва ура хуракан чăрмавĕ те йышлă. «Пĕччен хулă авăнать» тесе ахальтен каламан ватăсем. Çак сăмах чăваш кинематографисчĕсене тӳрремĕн пырса тивнĕн туйăнать. Пултаруллисем йышлă, анчах пĕчченшерĕн ĕçленĕрен пысăк ӳсĕмсемех тăваймаççĕ. Çак шухăша вĕсем хăйсем те пĕр пухура палăртнăччĕ.**

**2014 çул чăваш кино ăстисемшĕн пĕлтерĕшлĕ темиçе пулăмпа асра юлĕ. Кăçал пултарулăх ушкăнĕ – Чăваш кинематографисчĕсен союзĕ – йĕркеленчĕ. Çак пуçарăва Культура министерстви те ырласа йышăнчĕ. Документлă, вăйă тата ытти фильм ӳкерекенсем пĕрле ĕçлесшĕн. Союз ертӳçи О.Цыпленков каланă тăрăх – пĕрлешӳ пысăк тĕллевсене тĕпе хурса ĕçлесшĕн. Уйрăмах пĕлтерĕшлисенчен пĕри вăл, ахăртнех, федераци программисене хутшăнса наци фильмĕсене ӳкерме грантсем çĕнсе илесси. Çакăн валли интереслĕ проектсем кирлĕ. Ун йышшисем хальхи вăхтра та çук мар. Малашне тата та ытларах пулĕç.**

**Хальлĕхе союза республика шайĕнчи общество организацийĕ пек йĕркеленĕ. Ӳлĕмрен, тен, Раççей союзĕн регион уйрăмĕ те пулса тăрĕ. Чи пахи – пуçламăшĕ пур. Çакă та хамăр тăрăхри режиссерсем, продюсерсемпе операторсем вăл е ку пулăшăва тивĕçессе шанма май парать.**

**Тепĕр пысăк инкек вăл, манăн шухăшăмпа, хальхи вăхăтра чăваш режиссерĕсен ĕçĕсем пысăк экран çине тухайманни. Телекурав эфирĕсенче те вĕсене валли вăхăт сахал уйăраççĕ. Чăвашла ӳкернĕ фильмсене вара çынсем курасшăн. «Чăваш киновĕ хăйĕн кураканне тупнă. Халăх патне вĕсем дисксем урлă çитеççĕ. Пахалăхĕ Мускав, Голливуд шайĕнче пулмасан та вĕсене çынсем юратса пăхаççĕ», – тенĕччĕ В.Цыпленков «Хыпар» хаçат йĕркеленĕ «çавра сĕтелте». Пахалăха çĕклеме вара паха оборудовани кирлĕ. Кунпа та, шел, чăваш кинематографисчĕсем мухтанаймаççĕ.**

**Патшалăх пулăшăвĕсĕр инçе каяймăн. Акă, сăмахран, И.Максимов-Кошкинский ĕçленĕ çулсенче самана йывăр пулнă. Апла пулин те чăваш правительстви бюджетран укçа уйăрма майсем тупнă. Паян аталаннă çĕр-шывра пурăнатпăр. Кино ăстисем валли вара темшĕнçке тимлĕх çитсех каймасть. Искусствăн тĕрлĕ тытăмĕнче пысăк çитĕнӳ тăвакансене тĕрлĕ майпа хавхалантараççĕ. Кинематографистсем валли мĕншĕн уйрăм грант туса хурас мар? Çав укçа-тенкĕ чăваш киноискусствин аталанăвне чылай хăвăртлатнă пулĕччĕ. Тепĕр шанчăк та чун тĕпĕнче мĕлтлетет-ха: тен, пуласлăхра чăваш фильмĕсене уйрăм кинотеатрсенче пăхма пуçлăпăр?**

**Чăваш Енре 2008 çултанпа сахал йышлă халăхсен кинематографне халаллаңă Шупашкар кинофестивалĕ иртет. Кăçалхи, çиччĕмĕшĕ, уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пулчĕ. Мĕншĕн тесен унта хамăр тăрăхри ăстасен ĕçĕсем хутшăнчĕç. Пĕрремĕш хут. Чăваш çĕрĕнче йĕркелекен мероприятие чăвашсене хутшăнтарманни чылай калаçтарчĕ паллах. Тавах, пуш сăмах шайĕнче пăчланмарĕ çав калаçу – çимĕçне пачĕ. Пирĕншĕн, чăваш киноне юратакансемшĕн тата, уйрăмах ăна кун çути кăтартассишĕн тăрăшакансемшĕн, питĕ пысăк çитĕнӳ çакă. Шупашкар кинофестивалĕнче кăçал чăвашла сакăр фильм кăтартрĕç. «Нарспи» мюзикл конкурса хутшăнчĕ.**

**Чăваш киноискусствишĕн пĕлтерĕшлĕ çак пулăм çĕнĕ ĕçе пуçăнма та хавхалантарчĕ. Чăваш Республикин Культура министерстви, Чăваш патшалăх электрон тата кинодокументаци архивĕ, Чăваш кинематографисчĕсен союзĕ пĕрле чăваш режиссерĕсен ĕçĕсен фестивальне йĕркелеме палăртаççĕ. Унта çĕнтернисене вара саккăрмĕш Шупашкар кинофестивальне хутшăнтарасшăн. Манăн шухăшăмпа – питĕ ырă, вырăнлă пуçару.**

**Хамăр тăрăхри режиссерсемпе операторсем чăваш халăхĕшĕн пысăк ĕç тунине палăртассăм килет. «Пирĕн хамăрăн историе упраса хăварма тăрăшмалла. Унсăрăн пуласлăх çук. Чăвашсене мăнаçланмалăх никĕс – Аттила, Бичурин пек çынсем – кирлĕ. Çавсем пирки ытларах ӳкермелле. Чăваш çĕр-шывĕ çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕ теççĕ. Кинона та çав тĕрĕ шайне çитересчĕ», – тенĕччĕ пĕррехинче «Аксар» студи ертӳçи Алексей Иванов. Кинематографистсем наци темине тĕпе хурса ĕçлени уйрăмах килĕшет. Çавăн пекех вĕсем пирĕн хушăра пурăнакан талантлă çынсене, республикăра пулса иртекен паллă пулăмсене, районсенчи халăх коллективĕсен пултарулăхне, ĕçĕхĕлне, кун-çулне кинолента çинче упраса хăварасшăн.**

**«Кино туйăмне пур халăха та паман: пĕрисен вăл пур, теприсен пач çук», – тенĕ Андрей Плахов кино тĕпчевçи. Чăваш халăхĕн «çав туйăмсăррисен шутне» лекес марччĕ. Телее, пирĕн пултаруллă режиссерсемпе операторсем, ытти ăста сахал мар. Вĕсем чăваша «кино туйăмĕллĕ» тăвасса шанас килет.**

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

# Пěр-пěрне пулăшса – çěнě çитěнӳсем патне!

/Вěçě. Пуçламăшě 1-мěш стр./.

Чăваш Республикин Аслă Канашěн депутачěсем пулнă. Вěсенчен пěрне пайăррăн палăртса хăварни вырăнлă.

Чăваш çěр-шывěнче Вăрнар тăрăхěн маттурне Василий Романова лайăх пěлеççě. Вăл малтан «Янгорчино» колхоза ăста ертсе пынă, унтан асăннă район Канашěн ěçтăвкомěн ертӳçи, кайран парти райкомěн пěрремěш секретарě, СССР Аслă Канашěн депутачě пулнă. Канашлура Василий Игнатьевич ěçтешěсен умěнче хěрӳллě сăмах каларě, пасар экономики кăларса тăратнă йывăрлăхсене пăхмасăрах тăвалла пулсан та малаллах хастаррăн талпăнакан çамрăк ертӳçěсене шанса тăнине уçăмлăн палăртрě.

Трак тăрăхěнчен килнě Николай Матвеев та Романов шухăшěпе килěшнине пěлтерчě. Николай Матвеевич 20 çула яхăн «Герой» колхоза пултаруллăн ертсе пынă. «Пěтěм шанчăк – паянхи яшкěрěмре, – терě вăл. – Çěнě самана пысăк та шултра агрохолдингсен пěлтерěшне мала хурать пулсан та пěчěк хуçалăхсене те манăçа хăварас марччě. Вěсем чăваш ялěсем тытса пыракан йăла-йěркене упраса хăварма пулăшаççě».

ЧР ял хуçалăх министрě Сергей Павлов республикăри АПК аталану çулěпех малалла кайнине çирěплетекен цифрăсем илсе кăтартрě. Чăваш аграрийěсем çулталăк пуçланнăранпа мěн пурě 11,3 миллиард тенкěлěх продукци туса кăларнине мěншěн палăрамлă утăм тесе хаклас мар? «Пирěн ӳсěмсем тата та пысăкрах пулма пултарнă, – терě Агропромышленноç комплексěнчи ветерансен союзěн председателěн çумě, хăй вăхăтěнче республикăн Ял хуçалăх министерствине ертсе пынă Петр Ивантаев. – Тахçан хамăра пысăк тупăш курма майсем туса панă хăмлана шутран кăлартăмăр-çке. «Симěс ылтăна» тепěр хут çул пама вăхăт çитрě. Халě унăн 1 килограмě 1000 тенкěрен кая мар. Мěн чухлě укçа çухататпăр усăсăр. Чикě леш енчен кӳрсе килекен уйрăм таварсем пирки чару йышăннă хыççăн юхăнса кайнă хăмла пахчисем çинчен аса илекенсем тупăнмаллах».

Петр Васильевич Правительствăра АПК ěçченěсен шухăш-сěнěвěсене шута илекен уйрăм тытăм йěркелемеллех тесе шухăшлать.

Канашлура çавăн пекех ЧР Министрсен Кабинечěн Председателěн çумě – сывлăх сыхлавěпе социаллă аталану министрě Алла Самойлова, Чăваш Патшалăх Канашěн Председателěн çумě – экономика политики, агропромышленноç комплексě тата экологи енěпе ěçлекен комитечěн председателě Олег Мешков, «Чăваш бройлерě» АУО директорě, Патшалăх Канашěн депутачě Вадим Николаев сăмах тухса કаларěç. Депутатсем республика парламентěнче ял çыннисен интересěсене хӳтěлекен ушкăн самаях ăнăçлă ěлкěрсе пынине, вăл тыр-пул ăстисемпе выльăхчěрлěх пăхакансене тивěçтерекен саккунсен проекчěсене çул парассипе ěçленине палăртрěç.

«Агропромышленноç комплексěнчи ветерансен союзě» общество организацийěн ертӳçи Василий Шадриков пěр тěллевлě кăмăл туртăмě хушнипе пěрлешнě çынсене хăйěн хӳтлěхне илнě организаци ӳлěмрен те республика ертӳлěхěпе, ЧР Патшалăх Канашěпе тачă çыхăнса ěçлессине, вăраха ямасăр татса памалли ыйтусене йышпа сӳтсе явассине, яллă вырăнсене час-часах тухса çӳрессине тěпе хурасси пирки пěлтерчě.

Вăрнар тăрăхěнче пулнă май асăннă районта вырма ěçěсем мěнлерех пынипе те кăсăкланчěç ветерансем. Район администрацийěн пуçлăхěн Леонид Николаевăн хуравě вěсене тивěçтерчě. Вăрнарсем тыр-пул пухса кěртнипе пěрлех çитес çулхи тухăç никěсне хывас енěпе те пуçаруллă.

«Эпир хамăрăн каçалăксене кал-кал катса пынă хушăрах кӳршě Çěмěрле районěнчи хуçалăхсене те пулăшма май тупатпăр, – терě «Вăрнарти ашкакай комбиначě» АУО генеральнăй директорě Николай Аливанов. – Паян пирěн 7 комбайн, çав шутра хамăра парне кӳнě «Агромаш» та, кӳршěсен уйěсенче тăрăшаççě».

Николай Владимирович хăйěн сăмахне çапла вěçлерě: «Эсир пирěн пата кěрхи уй-хир ěçěсен кăтартăвěсене пěтěмлетнě хыççăн тепěр хут килěр. Кěр мăнтăрěн ырлăх-тивлетне сирěнпе пěрле пайлăпăр».

■ Геннадий КУЗНЕЦОВ





# 100 çулти кинемей кăмпана çӳрет

***Патăрьел районěнчи Аслă Арапуçра пурăнакан Васса Николаева çывăх çыннисемпе тата тăванěсемпе 100-мěш çуралнă кунне паллă тунă.***

Васса Клементьевнăна çавăн пекех Патăрьел район администрацийěн пуçлăхěн социаллă ыйтусемпе ěçлекен çумě Валерий Осипов, Аслă Арапуç ял тăрăхěн пуçлăхěн çумě Александр Никитин саламланă, асăнмалăх парнесем панă. Ялти культура ěçченěсем вара чăваш юррисене шăрантарнă. Васса Клементьевна пěр ěмěре хыçа хăварнă пулин те хăйне çирěп, тăн-тăн тытнинчен тěлěннě хăнасем. Шураппа утса тухнă пурнăç çулне аса илнě, тăванěсем пирки каласа панă. Вăл халě те тěк лармасть-мěн: вăрмана çырлана, кăмпана çӳрет, тутлă кукăль, пӳремеч пěçерет. Ватă Аслă Арапуçри крахмал заводěнче ěçлесе тивěçлě канăва тухнă. Мăшăрěпе Иван Ивановичпа вěсем 7 ача пăхса ӳстернě. Шел, упăшки 1973 çултах пурнăçран уйрăлнă. Васса Клементьевна 5 ачипе усрава илнě ывăлне те юлашки çула ăсатнă ěнтě. Паян вăл ывăлěн Владимирăн çемйипе пěрле пурăнать. Ун патне 25 мăнукěпе 35 кěçěн мăнукě тăтăш хăнана çӳреççě. Ялти хисеплě ватă хăнасене те хăй пек нумай пурăнма ырă суннă. «Çапла пултăрччě тесен яланах сывă пурнăç йěркине пăхăнмалла, ěçлеме ӳркенмелле мар»,– вăрттăнлăха уçнă вăл.

■ Р.АНАТОЛЬЕВА

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашěнче 2014 çулхи авăн уйăхěнче граждансене харпăр хăй ыйтăвěсемпе йышăнмалли КУНСЕМ**

**/Цифрăсемпе йышăну кунěсене палăртнă/**

| | | |
|---|---|---|
| 23 | Ю.А.Попов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн Председателě |
| 30 | А.П.Князев | Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн Председателěн çумě – Чăваш Республикин Бюджет, финанссем тата налуксем енěпе ěçлекен комитечěн председателě |
| 09 | О.В.Мешков | Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн Председателěн çумě – Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн Экономика политики, агропромышленноç комплексě тата экологи енěпе ěçлекен комитечěн председателě |
| 24 | П.С.Краснов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн Социаллă политика тата наци ыйтăвěсемпе ěçлекен комитечěн председателě |
| 25 | Н.В.Малов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, Регламент тата депутат этики енěпе ěçлекен комитечěн председателě |

Граждансене Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн Йышăну пӳлěмěнче 10 сехетрен пуçласа 17 сехетчен çак адреспа йышăнаççě: Шупашкар хули, Президент бульварě, 10-мěш çурт, 3-мěш пӳлěм.

Ыйтса пěлмелли телефон: 64-21-67.

*Ял уявě*

# Эпир мěнрен кая?

***Кашни ялăн хăйěн историйě, мухтавлă çыннисем, ку чухнехи иртсе пыракан шавлă ěç çеммиллě кунěсем… Мěнле пурăнать-ха вăл, мěнпе сывлать? Ялсен пурнăçě çинчен «Хыпарта» вуласах пыратпăр, çыннисемпе пěрле савăнатпăр. Тăван ен пирки шухăша путатпăр.***

Чылай ял хăйěн çуралнă кунне палăртма вăй çитерет. Çуралнă тăван кěтес кун-çулне пěлмеллех пирěн. Йăли-йěркине аталантармалла, çитěнекен ăрăва паллаштармалла-вěрентмелле. Вěсем ăна та, ял культурине те ан манччăр, пуянлатма-çěнетме тăрăшчăр. Çакă вара эпир паян вěсемпе епле ěçленинчен нумай килет.

Ку таранччен ял уявне ирттермен-ха. Пěр шухăшласан шиклентерет те, ара, мероприяти валли укçа-тенкě тупма, хěрӳ ěç вăхăтěнче халăха пуçтарма çăмăл мар. Анчах Шаккăл ял тăрăхěпе пěрле вăй çитерсе ăна ирттересех терěмěр: эпир мěнрен кая? Пултараймастпăр-и? Вячеслав Михайлов ентешěмěр спонсор пулма килěшрě.

Шăмат кун, çурла уйăхěн 23-мěшěнче, кивě клуб çывăхěнчи лапама халăх йышлă пухăнчě. Хыпарне малтанах пěлтернěрен çынсем турткаланса тăмарěç – килěшрěç. Сěтел-пукан таврашне хăйсемех хатěрленě.



11 сехетре спорт ăмăртăвěсем пуçланчěç. Анатолий Ефимов, Василий Николаев, Владимир Гаврилов, Василий Егоров хавхалантарнипе пěр ушкăн шашкăлла выляса мала тухассишěн тупăшрě. Тепěр ушкăн хăйěн пултарулăхне дартс вăййинче тěрěслерě. Кěске сăнна тěл ывăтассипе Кристина Михайловăпа тусěсем палăрчěç.

Волейболла выляма та кăмăллаççě çамрăксем. Кунта командăсем пěр-пěрне кӳрентерес темерěç: туслăх çěнтерчě тесе йышăнчěç.

14 сехетре районти культура çуртěнчен хěрарăмсен «Ентешсем» ансамблě тата «Форсаж» ташă ушкăнě килсе çитрě. Хăнасен пултарулăхě куракансене чунтан килěшрě. Уйрăмах баян тата хут купăс калакан Владимир Стеклов, вăл Чăваш Республикин культурăн тава тивěçлě ěçченě, ăсталăхě тыткăнларě.

Шаккăл ял тăрăхěн пуçлăхě Геннадий Степанов сăмах каласа ял çыннисене уяв ячěпе саламларě. Ветерансен канашěн председателě Геннадий Белов Кивě Ахпӳрт епле пуçланса кайни çинчен каласа кăтартрě.

Вăйă çěнтерӳçисене, праçник ирттерме хастар хутшăннисене, юбилярсене Тав çырăвěпе, Хисеп хучěпе, хаклă парнепе чысларěç.

Юлашкинчен пурте кěрекене вырнаçрěç, техěмлě шӳрпе ас тиврěç.

Юрă-ташăсăр уяв епле ирттěр? Халăх чылайччен савăнчě. Çамрăксем дискотекăра киленчěç.

■ Татьяна ВАСИЛЬЕВА, культура çурчěн директорě.

Канаш районě

Светлана ИВАНОВА сăн ӳкерчěкěсем



● *Уяв саманчěсем.*

# Грипран сыхланма – вакцинăсем

***2014-2015 çулсенчи кěркуннехи-хěллехи тапхăрта халăха грипран тата респираторлă вирус чирěсенчен хӳтěлес тěлěшпе Чăваш Республикине «Гриппол» тата «Гриппол плюс» вакцинăсен 39 пин ытла дозине илсе килнě. Ку – вакцинăн пěрремěш партийě, хальхи вăхăтра ăна республикăри медицина организацийěсен прививка тăвакан пӳлěмěсене валеççě.***

Кăçал халăха ирттерех прививка тăваççě, 260 пин ытла çын тěлěшпе, çав йышра 95 пин ача, профилактика ěçěсем ирттерěç. Чи малтанах шкул çулне çитменнисен вěренӳ учрежденийěсенчи 6 уйăхран аслăрах ачасен, студентсен, медицина, вěренӳ учрежденийěсен, общество транспорчěн ěçченěсен тухтăрсем патěнче пулмалла. Предприятисемпе организацисен ертӳçисен те ăнланулăх кăтартмалла, мěншěн тесен вакцинаци – коллективра чирсен шутне чакармалли, ěç тухăçлăхне сыхласа хăвармалли чи лайăх мел.

Палăртса хăвармалла: кăçалтан пуçласа Раççей Сывлăх сыхлавěн министерствин 2014 çулхи пуш уйăхěн 21-мěшěнчи 125н приказěпе килěшӳллěн грипран вакцина тутарма тивěçлě çынсен ушкăнне анлăлатнă. 2014 çултанпа ку йыша тата çаксем кěреççě – çире пур хěрарăмсем, 60 çултан аслăраххисем, призывниксем, чěрепе юн тымарěн е сывлав тытăмěн вăраха кайнă чирěсемпе, самăрлăхпа аптракансем, метаболика енěпе улшăнусем палăракан çынсем. 2014-2015 çулсенчи чир анлă сарăлнă тапхăрта халăхăн 30 яхăн проценчě грипран хӳтлěх илě – ку вăл тěнчере грипран хӳтěленсе вакцина тунин чи çӳллě шайěсенчен пěри.

Иммунизаци кăçалхи раштавăн 1-мěшě тěлне вěçлеме палăртаççě. Нацин профилактика прививкисем ирттермелли календарě тăрăх çав вăхăтчен Чăваш Ене препаратăн 260 пине яхăн дозине кӳрсе килмелле.

■ С.АНТОНОВА

# Мăн Сěнтěрти Бурнов

***Муркаш тăрăхěнчи Мăн Сěнтěрте пулман эпě. Пěчěк сала-и вăл, пысăк-и?.. Çавах та хăй вăхăтěнче кунта район центрě пулнине пěлетěп. Халě вара Атăл хěрринче вырнаçнă «Вега» канупа сиплев центрěнче Вячеслав Ильич Бурновпа паллашни, унпа чуна уçса калаçни Мăн Сěнтěре лайăхрах пěлме, ěç ветеранěпе çывăхрах паллашма май пачě.***

Çамрăках мар Илле ывăлě. Кăçалхи утă уйăхěн 16-мěшěнче 71 çул тултарнă. Мăн Сěнтěрти Тěп урамри 36-мěш çуртра пурăнать. Хăй купаланă кирпěч пӳртре. Сачě те, анкартийě те пур.

– Хăмла çырли çум курăк еверěх. Лартса хăвартăм та темиçе çул каялла, халě пěтěм пахчана сырса илчě. Улмуççисем те пур манăн. Улми лайăх-и, çеçки лайăх-и тенěрен, улма-çырли аванрах, – тет Вячеслав Ильич. – Тутанса пăхăр хăмла çырлине...

Вăл тăван пахчаран татса килнě çырласене сěтел çинчи турилккене тултарчě. Шултраскерсем чăннипех те сиплě, пылак, тутлă.

– Манăн юратнă мăшăрăм Раиса Алексеевна та хăмла çырлипе туслăччě. Шел, пирěн хушăра çук ěнтě... Ишлей хěрě пулнăччě, педагогчě. Математика предмечěпе пěлӳ паратчě.

Эпě йышлă çемьере çуралса ӳснě. Ку çурта кукаçин тěп килěнче çавăртăм. Кукаçине ялта Трофим Кульков тенě.

Пирěн тăрăхра вырăс çыннисем пурăннă. Тен, çавăнпах та пулě манăн та хушаматăм вырăсларах янăрать.

Ял-йышра В.Бурнова ытларахăшě Славик тесе чěнет. Ячě ятах ěнтě. Хăшěн-пěрин пек апла-капла тăрăхласа калакан çук.

– Мăн Сěнтěрти вăтам шкулта çичě çул вěреннě хыççăн 1957 çулта Шупашкарти электротехникума çул тытрăм. 1961 çулта дипломлă çамрăка, электротехник специальноçне алла илнěскере, направленипе Инçет-Хěвел тухăçне ячěç. Çакăнта Амур çинчи Николаевск хулинче электрохуçалăх ěç-хěлěпе çыхăнтартăм хамăн кун-çула, – иртнине куç умне кăларчě Вячеслав Ильич. – 1963 çулта çара илчěç, Карпат çар округěнче хěсметре тăтăм.

Ěç стажě 40 çулпа танлашать ветеранăн. Ку тапхăра вăл «Чăвашэлектросеть» тытăмěнче ирттернě: дисциплинăна пăсман, ěçкě-çикěпе иртěхмен.

Мăшăрсăр чунра лăпкă мар паллах... Тепěр чух, кичемлěх тыткăнне çаклансан, куçне вěри куççуль капланать. Ирěксěрех, чуна уçмалла, юрă-кěвě юхса килет вара...

Чăваш халăх юрри-кěввине кăмăллать В.Бурнов. Уйрăмах уншăн наци радиовě хатěрленě кăларăмсем çывăх.

– Алăран кěнеке, хаçат-журнал ямастăп. Л.Агаков, В.Алентей, Л.Таллеров, Илпек Микулайě çыравçăсен хайлавěсем килěшеççě. «Хыпар», «Чăваш хěрарăмě» хаçатсене юратса вулатăп. «Вега» канупа сиплев центрěнче каннă вăхăтра библиотекăран тухмарăм. Тавах, Надежда Едифанова библиотекаре, – шухăшне пытармасть Вячеслав Ильич. – Тавах сиплев центрěнчи ěçченсене!

■ Георгий ТУСЛИ

# Зарядка – юратнă мероприяти

***Çак кунсенче Пăрачкав сали 423 çул тултарнă. Уяв «çăлтăрпа» зарядка тунинчен пуçланнă.***



Салан тěп тӳремěнче сывă пурнăç йěркине пăхăнакан 500 ытла çын пухăннă. Вěсен йышěнче ача садне çӳрекенсем те, шкул ачисем те, вěсен ашшěамăшěпе аслашшě-асламăшě те пулнă. Пухăннисене хăнăхтарусемпе спорт «çăлтăрěсем» – спорт аэробики енěпе Чăваш Енěн пěрлештернě команди, çав шутра Европа тата тěнче чемпионě Алексей Германов – паллаштарнă. Пăрачкав ял тăрăхěн пуçлăхě Александр Барыкин, районти предприяти-организацисен пуçлăхěсем вара пурне те ырă тěслěх кăтартнă.

Спорт аэробикин элеменчěсене кěртнě зарядка питě хаваслă та çěкленӳллě иртнě. Юлашкинчен республикăри спорт аэробикин федерацийěн членěсем ял çыннисем валли ăсталăх сехечěсем йěркеленě, хăйсен чи лайăх программипе паллаштарнă. Çапла вара пěрпěр «çăлтăрпа» ирхи зарядка тăвасси ял тата хула çыннисен пурнăçěнче çирěп йěркене çаврăнчě, юратнă мероприятисен йышне кěчě. Çакă питě аван.

А.ГРОМОВА.

•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•

# Никамшăн та ют мар

Культура учрежденийĕсенче çеç мар, ытти отрасльте ĕçлекенсем те Культура çулталăкĕнче ырă пуçарусемпе палăраççĕ: вăл никамшăн та ют мар. Ял хуçалăхĕнче, акă, çĕр ĕç культури пĕлтерĕшлĕ, тепĕр тытăмра – тата тепри.

Юлашки вăхăтра чăваш ялĕсем типтерлĕхпе палăрма тытăнчĕç, уйрăм çынсен хуçалăхĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла хитреленеççĕ. Çав вăхăтрах коллективлă обществăсене, кооперативсене ку тĕлĕшпе ырлаймăн. Ытларах чухне вĕсем хăйсене тӳррен тивекен тивĕçĕсене пурнăçлаççĕ те культура, чунлăх, ăсхакăл пирки аса та илмеççĕ. Культура çулталăкĕн пархатарĕ çав енĕпе пысăк та, кашнин чĕрине пырса тивет, халĕччен лăпкăн пурăннă çынсене «вăратать».

# Пĕрчĕн-пĕрчĕн – çичĕ çул



Канашри тавра пĕлӳ музейĕн ĕçченĕсем пысăк çитĕнӳ тунă: вăраха пынă реставраци хыççăн пысăк зала хута янă. Ăна нумаях пулмасть уçнă. Савăнăçлă саманта музей ĕçченĕсемпе пĕрле паллă тума Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Вячеслав Александров, Канаш хулин администрацийĕн пуçлăхĕ Людмила Иванова, Канаш районĕн администрацийĕн пуçлăхĕ Владислав Софронов, предпринимательсем, строительсем, ыттисем пуçтарăннă.

«Канаш районĕн кун-çулĕнче эпир пурте ас туса юлмалли самант питĕ нумай. Вĕсемпе çыхăннă пулăмсене асăннă музей упрать те, – тенĕ Вячеслав Александров. – Çак учрежденин пысăках мар коллективне истори тĕрĕслĕхне пулас ăрусем валли упранăшăн пысăк тав».

Музей сотрудникĕсем хыççăн тăрăшса çичĕ çул юсанă музей çуртне. Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенчи икĕ хутлă архитектура çурчĕ паян – культурăн хальхи вăхăтри паха учрежденийĕ. Çапла майпа пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çут çанталăк, этнографи, чукун çул транспорчĕн залĕсем, картина галерейи тата ремесла çурчĕ уçăлнă.

Пысăк зала реставрацилесси уйрăмах кăткăс пулнă, çапах та ăна малтанхи сăнне тавăрса пама мехел çитернĕ.

# «Чавал» пуçарăвĕпе

Хĕрлĕ Чутай районĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ тĕп хулара пурăнакансем яланах пуçарăллă. Культура çулталăкĕнче вĕсен хастарлăхĕ тата та ӳсрĕ. «Чавал» /Хĕрлĕ Чутайсен ентешлĕх ячĕ/ пуçарăвĕпе район центрĕнче пысăк концерт иртнĕ. Халăх килĕштерекен паллă юрăçсем Земфира Яковлева, Станислав Кондратьев, Александр Самсонов, Юлия Юнисова, Иван Шинжаев, çавăн пекех Регина Чишкина, Алесей Максимов çамрăк солистсем хăйсем çуралса ӳснĕ тăван кĕтесĕнче чăн-чăн уяв туса панă.



# Туризма çĕклесшĕн

Федерацин Атăлçи округĕнчи культура учрежденийĕсем Культура çулталăкĕнче палăртнă тĕллевсене мĕнле пурнăçласа пыни пирки çĕртме уйăхĕнче Шупашкарта пысăк мероприяти иртнĕччĕ. Ун чухне вырăнтан килнĕ министрсем, яваплă ытти специалист хăйсен опычĕпе паллаштарнăччĕ. Эрĕнпурсем, сăмахран, Атăлçи округĕнчи театрсен фестивальне йĕркеленĕ. Вăхăт нумай та иртмен, облаçри Соль-Илецк хулинче каллех пысăк форум, «Раççейри ял туризмĕ» ятлăскер, пухăннă. Ун ĕçне Чăваш Ен делегацийĕ те хутшăннă. Ăна ЧР культура министрĕн çумĕ И.Иванов ертсе пынă.



Хальхи вăхăтра пирĕн çĕр-шывра ял туризмĕ ура çине тăрса пырать. Вăл яллă хутлăхра ĕç вырăнĕсем тума пулăшать, унта пурăнакансен пурнăç условийĕсене лайăхлатма, социаллă инфратытăма йĕркене кĕртме, халăх промыслине аталантарма, йăла-йĕркене упраса хăварма май парать.

Форум вăхăтĕнче Раççей субъекчĕсен ĕç тăвакан влаçĕсен ертӳçисен регионсен хушшинчи канашлăвĕ, конференцисемпе семинарсем иртнĕ.

# «Пучах» уй-хире тухать

Элĕк районĕнчи ял тăрăхĕсен хушшинчи культурăпа кану центрĕ çумĕнче темиçе çул ĕнтĕ «Пучах» агитбригада ĕçлет. Культура çулталăкĕнче вăл хăйĕн ĕç-хĕлне тата та лайăхлатнă. Ĕççи вăхăтĕнче хуçалăхсене тухса çӳрессине хăйĕншĕн уйрăмах пĕлтерĕшлине палăртнă. Çак кунсенче «Пучах» «Авангард» ЯХПКна çитсе килнĕ. Тăхтавпа апат вăхăтĕнче вырăнти артистсем ял ĕçченĕсене илемлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарнă.



# Пан улми сăпасĕнче – ял кунĕ

Муркаш районĕнчи Оринин ялĕн кунĕсем халĕччен те иртнĕ-ха, Культура çулталăкĕнче ăна тата мăнаçлăрах йĕркелеме тăрăшнă. Пан улми сăпасĕнче ял хушшинчи тӳрем савăнăçлă сасăпа кĕрлесе тăнă. Хастарсем тăрăшнипе пысăк хуранпа шӳрпе пĕçернĕ, сĕтел тутлă апат-çимĕçпе тулнă.

Уява Орининти информаципе культура центрĕн ĕртӳçин Венера Васильевăн уçă сасси шăрантарнă юрă уçнă. Ял уявĕпе халăха Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Волков, Муркаш район депутачĕ Виталий Иванов, ял старости Юрий Соловьев саламланă.

Ял çыннисене чăваш эстрадинчи çамрăк юрăç Николай Ключников хавхалантарнă, Виктория Захарова çыпăçуллă ташăпа тыткăнланă. Спорта юратакансем çамрăксем футболла вылянине пăхса савăннă. Чи кĕçĕннисем батут çинче сиксе киленнĕ. Уяв сĕм тĕттĕмччен тăсăлнă.

**Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•

*Юбилей*

# Илле Тăхти прози

***И.Тăхтин çырас ăсталăхĕ те, пурнăçа ӳкерес мелĕ те пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен пĕр стильлĕ тата пĕр шайра пулман.***

И.Тăхти пултарулăх ĕçне халăх сăмахлăхĕпе кăсăкланнă май кĕрсе кайнă. 1905 çулта вăл Н.Никольский ыйтнипе тĕрлĕ халап пухать. 1906 çулта пулас çыравçă семинарире алпа çырса кăларакан «Шурăм пуç» журнал валли «Мĕн курни, мĕн илтни» ятпа виçĕ халап çырса парать. Вĕсемпе усă курса каярах илемлĕ хайлавсем çырать.

«Эпĕ çуралнă çĕр-шыв» хайлавра калавçă истори халапĕсене, ваттисем аса илнисене каласа пани курăнать. Вăл темиçе яла танлаштарса тишкерӳ те тăвать: «Чӳрече хупписене сăрламан, сăрлама укçа кирлĕ, пирĕн ялти чăвашсем пуян мар, çавăнпа хутахай хыççăн пит каймаççĕ... Ĕç хыççăн йăванарах çӳресен, апата тутлă çисессĕн вара çултан çула çитерсе пырасси питĕ хĕнĕ». Юнашар Энĕшпуç ялĕнчех урăхла иккен. Унта ĕçкĕçикĕпе вылянмаççĕ, «çут тум тăхăнса, пасар тавраш илсе» укçине пĕтермеççĕ. Çав ял пуянĕсем те арманти вырăссемпе ĕçсе çӳремеççĕ.

Çак 20-мĕш çулсенче вăйлах палăракан ирони стилĕллĕ, тишкерӳллĕ хайлава синкретикăлла жанрпа хайланă. Унти тĕп шухăш /чухăнлăх ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхнинчен, яка тумланма тата пуп таврашĕпе туслашма тăрăшнинчен килет тени/ çыравçăн «Финляндияра пурăнакан халăхсем» ятлă очеркĕнче /1908/ те сисĕнет. Финсемпе белоруссен, литвасен пурнăçĕ çинчен çырнă хыççăн автор еврейсем пирки калама пуçлать: «Еврей еврее пур çĕрте те пулăшма, ăс пама тăрăшать. Эрех хăйсен аллинче пулсан та еврей, вăл çын ĕмĕрне кĕскетнине пĕлсе, ĕçмест».

Çапла вара И.Тăхти малтанхи очеркĕсенче, тĕпрен илсен, çутлăх ыйтăвĕсене хускатни курăнать. Вĕсенче çыравçăн иронийĕ те сисĕнет.

«Ухливан вутăша улталани» /1908/ ятлă юмаха И.Тăхти хайлав мелĕсене упраса çырса илме тăрăшнă. Вуланă чухне куç умне хайлавçă сăнарĕ тухса тăрать. Çапах та çав юмах хайлавçă сăнарне хăй кăна калăплайман пулĕччĕ, кунта итлевçĕ /вулавçă/ тимлĕхĕ Ухливанпа вутăш ачи хушшинчи тупăшăва йĕрлĕччĕ. Юмахран юмахлă калав туса уйрăм кĕнекен пичетлеме шухăш тытнă И.Тăхти унăн пуçламăшне туртса хурать те калавçă-хайлавçă сăнарне кăтартакан абзацсем кĕртсе лартать. «Пĕрре, хĕлле, каç пулттипе кӳршĕри Пилеш Мĕтри патне кайрăм, шакăлтатса ларма», – текен йĕркесем калу чăн пулса иртнине аса илнĕ пек сыпăнса пырасса систереççĕ. Ваçка калавçă юмах ăсти иккен.

Юмахлă калавăн икĕ пайне çыхаканĕ – Ваçка юмахçă сăнарĕ. Вăл пĕрремĕш пайри тĕнчере пурăнать, çав хушăрах тепĕр пайĕнчи ĕç-пуçа та пĕлет: хăй куçĕпе курнă ăна. Вулавçă юмаха вуланă чух та ăна калаканĕн сывлăшне туйса пырать. Лешĕ те манса каймасть хăйне итлекене. Пĕр вырăнта вăл çапла калани те пур: «Ухливана çакă çеç кирлине юмах итлекен те пĕлет».

Хайлав тĕп шухăшĕ унăн ятĕнче палăрманни иккĕленӳсĕр. Ухливан вутăша улталани çинчен калаканĕ хăй тĕпре тăрать кунта. Вăл сăмах ăсти, хăйне евĕр асамçă, сăмахпа ахăртиччен култарма кăна мар, выльăх-чĕрлĕх хунавне хăртма та пултарать.

Сăмах шăмакка пек сыпăкăн-сыпăкăн ӳссе чечеке ларма, таврана тутлă шăршă сарма пултарать иккен. Сăмах ăстин тĕп тĕллевĕ те сăмах çумне сăмах хушса çынсене çав сыпăнун илемĕ-ырлăхĕпе савăнтарасси-мĕн. Çак ытарлăхра И.Тăхти пултарулăхĕн тĕп енĕ курăнать. Унăн хайлавĕсенче ĕç-пуç черетленĕвне мар, чи малтан *сăмахсен сыпăнăвне* сăнамалла.

1910 çулта И.Тăхти хăй вĕрентекен ачасенчен тĕрлĕ юмах-халап, юрă-сăвă çырса илни, вĕсен пĕр пайне тепĕр çултан «Тавăт, Мĕлĕш, Шураç юррисем. Туй юррисем» ятпа Хусанта уйрăм кĕнекен кăларни паллă. Пичетленмен текстсен хушшинче çыравçă хăшхăш ял чухăн е пуян пулнине палăртни пур.

Çутлăх идейисене «Хураç» калав та пăхăннă. Унти тĕп харкамçă чухăн пурăнни вăл кахал тата ĕçкĕç пулнинчен килет иккен. Хураç сăвăлла шухăшласа каланă сăмахсене çыравçă Н.Некрасовăн «Юрăсем» ярăмри «У людей-то в дому – чистота, лепота» сăввин куçарăвĕнчен илни паллă. Вырăс сăвăçи чухăн хресчене пусмăрлани çинчен çырнă пулсан, И.Тăхти вара çав сăмахсене ялти ĕçкĕçпе кахала калаттарать. Ку вăл çыравçă ун чухне çутлăх идейисене мала лартнине пĕлтерет.

Чи тĕлĕнмелли – калав ячĕпе унăн шухăшĕ каллех тӳр килменнинче, çав кĕнеке «Пуян пулас килсен çак кĕнекене ил» ятпа пичетленнĕ. Хайхи пуяс ĕмĕтлĕ çын туянать те ăна ĕçлемесĕр, вăй хумасăр пуйма май çуккине ăнланса илет. Е тата çав хайлавах 1926 çулта панă çĕнĕ ята илер-ха: «Ĕçчен çын». Вулавçă ӳркевсĕр çын çинчен вуласа пĕлме хатĕрленет, Хураç чухăн пулнинчен тĕлĕнет. Хайлав ятне кĕртнĕ сăмаха /ĕçчен/ хирĕçле пĕлтерĕшпе ăнланмаллине вăл вуланă май тин ăнланса илет. Хайлав ячĕсен пĕлтерĕшĕ И.Тăхтин пачах урăхла, вĕсене чылай чухне тĕрлĕ вулавçăран ансатраххисене асра тытса пыни сисĕнет. Çакă автор пĕр хайлавах темиçе сийлĕ шухăш варма тăрăшнипе те çыхăннă.

1919-1924 çулсенче И.Тăхти поэзи жанрĕпе çырнине вăл романтикăлла калăва çывăх тăракан сатирăлла калуенне куçса пынипе ăнлантармалла. Автор «Колчака» поэма тенипе килĕшмен, ăна вăл политикăлла памфлет тенĕ. «Таса туталлă пупсене» кăмăлламанни çыравçăн 1917 çулта хайланă «Пара слов о чувашской литературе» ĕçĕнче те вăйлах сисĕнет. Ăшă йĕплев тăрăхлава çаврăнса çитет. «Колчакри» кулăш çыннăн хăтланăвĕпе сăн-питне юри кулăшла ӳкерсе-сăнласа панине пула йĕркеленет. Кунта Н.Шупуççыннин витĕмĕ /«Пĕтелмей», «Чĕлĕм»/ те сисĕнет. Чăваш кулăшĕ 1919 çул тĕлне чылаях аталанни, ăна И.Тăхти витĕр пĕлсе тăни иккĕленӳсĕр.

1925-1930 çулсенче И.Тăхти романтикăлла эпикăлăхран калуçăн тăрăхлавĕ-питлевĕ урлă çав тулашри питлеве /вăл тĕрлĕ социаллă сийсенчен кулни пулнă/ шалти питлев енне /кунта чи малтан калуçă хăйĕнчен тăрăхланине асăнмалла/ çавăрса яма пултарнине палăртмалла. Çыравçа харкам тăрăхлу стиль тума, тарăн шухăш варма кирлĕ. Унпа пĕр харăсах Тăхти калури монтажлăх мелне алла илсе пырать. Çине-çине абзац пулни, ӳкерчĕке сахал сăмахпах ӳкерсе пани, курăма пысăкран пĕчĕклетсе, сыпăнтарса пыни Тăхтин тăтăшах тĕл пулать. Акă çапла мелпе вăл «Ăслă, аслă, чаплă, сумлă паттăрсем» калавне /1926/ пуçлать те çав мелпех ăна вĕçлет. Кунта вара пĕчĕк курăм каллех пысăккине куçса каять: «Пушăт, мунчала, тавăрнă çăпата, шĕшлĕ сĕтелпукан çинче. Сак çинче кĕпе. Икĕ кантăк, хĕвел, пӳрт. Хурăн, йăмра – урамра. Пĕр ял, улăм витнĕ ял».

Çак стиль енне туртăнни çыравçа сăвăланă калуран монтажлă калу патне илсе çитерет. Поэзире «уссăр сăмах» нумай тесе шухăшлать вăл. Хăйĕн «Элихунне» пичетлесе кăларма май килменни ăна «Чăваш поэтсене» сăвва çырма хистет. Пĕр критик ал çыру çине «çакна çыраканĕн ăс-тăнĕ вырăнтан сикнĕ пулас» тесе палăртнă.

Çыравçă-калавçă хăйне сăмах сыпма пĕлменшĕн ӳпкеленĕ пек пулса тухать. Паллах, ытарлу мелĕпе çапла çырать ĕнтĕ вăл, çапах та халăхра «Кĕпçе пултăр сыпăклă, Сăмах пултăр татăклă» тесе каланине /«Колчак»/ ас тусах тăрать вăл. Халăхра сыпăнуллă текстсем питĕ



йышлă /вĕрӳ-суру чĕлхисем, сыпăнуллă юрăсем/. Унта кĕрекен текстсене монтаж мелĕпе йĕркеленĕ. «Çӳллĕçӳллĕ тусем пур. Тусем çинче чулсем пур. Чулсем çинче сар арча, Сар арчара йĕс тура». Çав сыпăнуллă меле ăша хывнă та ĕнтĕ çыравçă. Монтажлăх, хайлалăх, хайлаври шухăшăн нумай сийлĕхĕ, калавçă-автора мĕскĕнлетсе калаçтарма тăрăшни – çаксем пурте И.Тăхтин хăйне евĕрлĕ стильне йĕркелеççĕ. Çыравçăн прози ыттисеннинчен чăвашларах пулса тухнипе уйрăлса тăрать. Халăхăмăрăн сăмах вылятаслăх хевтине туйса вăл нимĕнех те каламалли çук тенĕ тĕлтенех каламалли тупать. Чылай чухне автор геройсен ячĕпе калаçать, вĕсен шухăшлавĕ-курăмне, чĕлхине палăртать. Ытларах чухне çав харкамçă сахал вĕреннĕ хресчен, вăл пурнăçри ырă улшăнусене çийĕнчех ăнланса та ĕлкĕреймест.

Тăхтин прози чăваш сăнарлă шухăшлавне çĕнĕ шая çĕкленме пулăшнă. Авторпа геройсен тĕнчисем пĕр марне кăтартни ун чухнехи прозăшăн питех те пĕлтерĕшлĕ. Çыравçăсем хăйсен шухăшне тенденциллĕ, çиеле кăларса калани, геройсене схемăласа калăплани хайлавсене шупкалатнă. Ку тĕлĕшрен Тăхти урăх, вăл геройсене ирĕке ярса, чылай чухне ухмаха суптарса калаçтарать. Ун пек вырăнсенче автор позицине палăртма çăмăлах мар.

И.Тăхти хăйĕн хайлавĕсенче чăваш тĕнчине, унăн наци характерне кăтартас тĕллеве сюжет-фабула йĕрлессинчен маларах лартать. Ку тĕлĕшрен унăн «Çиçĕм çăмахĕ» калавĕ /1927/ питех те курăмлă. Унти харкамçăсен тĕнчи – вĕренмен чăваш хресченĕн пурнăçĕшухăшлавĕ. Вăл çут çанталăк илемне туять, сăмах-çăвартан та, çи-пуçран та тирпейлĕ. Çав хушăрах хăй тĕнчинчен тухса курманскер ытти хулаçĕр пирки сахал чухлать. Унăн шухăшлавĕпе, апат таврашĕ вут çулăмĕ çинче кăна пиçме пултарать, электричество тенине вĕсем çунакан вутăн /вăл кăмака вучахĕнче çунать, тĕтĕм-сĕрĕм кăларать, савăтсапана хăрăмлать/ кăна курма пултараççĕ. Çапах та çакăн йышши калавсем палăртмаççĕ Тăхтин тăхтилĕхне.

«Сĕр. Пĕр. Сам. Канур» /1928-1929/ хайлав малтанласа И.Тăхтин «Калавсем» кĕнекинче кун çути курнă. 1979 çулта тухнă кăларăма ăна кĕртмен, «унта тĕл-тĕл вирьялсен калаçăвне анатрисенчен кĕçĕне хурса тăрăхлани сисĕнет» тесе асăрхаттарни кăна пур. Хайлава калавçă ячĕпе çырнă. Вăл анатри чăваш иккен, хăйне пуклак чĕлхеллĕ те катăк тăн-пуçлă çын вырăнне лартать.

«Катăкрах çав эпĕ. Çавăнпа пуль, ни анатри чăвашсем, ни тури чăвашсем, вирьялсем, эпĕ çырнă пеккине пит вуланиех туйăнмасть. Çынсем калаçаççĕ, пуплеççĕ, сăмахлаççĕ, çынсем çыраççĕ – çăкăр çине пылпа çу сĕрсе çинĕ пек, пĕр стакан чей çине икĕ кашăк сахăр, виçĕ кашăк хăйма ярса ĕçнĕ пек тутлă пулать вара çынсен çыру-сăмах таврашĕ. Ман сăмах-çыру унашкал пулас çук çав. Хам çара пуç, кукша эпĕ, ман çыру-сăмах-юмах та кукша-çке ĕнтĕ, мĕскĕн пулать çав ман çыру-пуплев».

Çак калавçă-харкамçă ыттисен ырă кăмăллă калаçăвне итлесен, вĕсем вырнаçуллă çырнисене вуласан кĕвĕçӳпе тулса ларать иккен. Пурне те ярса илме хапсăннăран вăл урамăн пĕр енĕпе хăй, тепĕр енĕпе вара арăмне уттарать: «Çапла вара, пĕр вăхăтлăха та пулин, арăмпа иксĕмĕр аслă урама хамăр алра тытрăмăр çав».

Çак «ыйăхлă, наян, ӳркенчĕк, кахал ятне кăна илтнĕскер», малтан анатриллерех çыркаланăскер, турисемле çырсан хăйне вулама пуçламĕç-ши тесе шухăшлать. Пуçлать хайхи сăмаха хуçкалама, аса илӳ çумне аса илӳ çыхма.

Калавçă автор ирĕкĕнчен тухать пек, пĕрре хĕвел ăшши çинчен /«анатрисене, вирьялсене – кама ăшшăнтарах пăхать-ши çав хĕвел»/, тепре çав ăшăра çара пуç çӳресе хăйĕн ăс-хакне ӳстересси çинчен пакăлтатать вăл. Сăмах йĕркине çухатнă калавçă вылясах каять: «Пĕтрĕм поль, çухалтăм поль, аташрăм поль, кокшă пуçра ман шанчăк çок, сăмахсен тилкепи ман алыран тохса ӳкрĕ полас, мин тувасхе».

Мĕнле çынна сăнарланă кунта И.Тăхти? Вирьял калаçăвĕнчен тăрăхлать-ши вăл? Мар, паллах. Кунта вăл чăваш çыннин пĕр типне ӳкерсе кăтартать. Çакă малалла çырнинче питĕ аван курăнса каять. Калавçă ирсерен, сертеçăмах яшкине «тин уçланă уйранпа сыпа-сыпа» çисе тăрансан, арăмне темиçе чĕлхепе тав тума манса каймасть: «Хăйпăт хатынăм – дорогой карчăклар, тауссе синекке, милой мой шена». Мăшăрĕ вара çармăс акценчĕпе хураврать.

Халĕ калавçă аслашшĕнчен тигр-арăслан таврашĕ мĕншĕн хаяр тата вăйлă пулни пирки ыйтнине аса илер. Çав «тискер кайăксем ирĕкре, вăрманта пурăнаççĕ, тем те пĕр çиеççĕ. Çавăнпа вĕсем вăйлă; сывă пулсан хаярланма та, куштанланма та пулать вара».

Сывă, вăйлă çынсем куштанланма пултараççĕ, пуян, ăслă пулаççĕ тенипе пĕр килмест-и çакă? Канур ятлă çын та витаминлă апат çинĕрен паттăра тухнă иккен. Паллах, калавçă вулавçăсене пахча çимĕç ытларах лартма чĕнсе çырни тĕп шухăш мар кунта. Вăл çиелте выртакан, ансат вулавçă ячĕпе калани кăна. Калавçă хăй те ăслăтăнлă çынах, вăл калас тенине юри уçăмсăрлатса пытарать, ухмаха перет. Ача чухне ăна попугай «ухмах» тесессĕнех вăл çав кайăка «чăмăрласа кăтартнă». Кайран /ватлăхраши, совет саманинче-ши?/ кăна вăл саккун пăсасран кăна мар, арăмĕн уттинчен те шикленме пуçлать. Е çапла çырса шăнман пăр çине лартать-ши вăл вулавça? Чăмăр кăтартса мар, ухмаха персе те чееленсе пурăнма вĕреннĕ çав калавçă. Акă мĕнле чăваш типне калăпланă кунта И.Тăхти.

1931-1937 çулсем И.Тăхтишĕн чи йывăр тата асаплă тапхăр пулнă. Пĕр енчен, литературăри цензура пăркăчне хытарса çитернĕ, çавна пула ирĕклĕрех çырнă калавĕсене пачах та пичетлеме май килмен. Тепĕр енчен, çыравçăн сывлăхĕ çулсерен хавшаса пынă. Вăл хăй нумаях пурăнмасса туйса тăнă. 1935 çулхи çурла уйăхĕнче И.Тăхти 60 килограмм тайнă пулсан, 1937 çулхи ака уйăхĕнче 45,7 килограмма çити чакнă.

1936 çулхи кĕркунне И.Тăхтие Тутарстанăн Аксу, Элкей тата ытти районне халăх юррисăмахĕсене пухма яраççĕ. Çакăн çинчен вăл В.Толстов-Атнарский патне янă çырăвĕнче çапла пĕлтерет: «Кĕркунне, йĕпе-сапара пĕр уйăха яхăн çул çӳресси çăмăлах мар ĕнтĕ чирлĕ çынна. Уна эсир, Валериан Григорьевич, лайăх пĕлетĕр. Чăвашла сăмах пур вара вăл – шăла çыртса-тӳссе çӳрерĕм çав тесе калама юрать пуль ун çинчен. Тепле тӳсрĕм вара. Хам та шухăшлап кайран. Тӳсесех тесен, этем пит нумай тӳсме пултарать пуль çав, тесе шухăшлатăп. Чăтăм пулсан, пит часах аптрамасть, тен, вăл çын. Чăтăмлă çын вăл, теççĕ вара хăш-хăш çын çинчен <...> çул çӳресси çăмăл мар ват çынна, чирлĕ çынни....»

Н.Шупуççынни вĕрентекенре ĕçленĕ тăрăхра çӳресе И.Тăхти нумай сăвă-юрă çырса илет. Çав юрăсенчен пĕрне икĕ чăваш сăвăçĕ, Н.Романов аса илнĕ тăрăх, ыталашсах юрланă иккен.

Кĕçех Н.Шупуççыннине арестлеççĕ, И.Тăхти юлашки кунĕсене пурăнса ирттерет. Çĕре кĕриччен пĕр уйăх маларах «Сунталăн» 9-мĕш номерĕнче хăй çинчен çырнине вуласан çыравçă мĕн шухăшланине эпир нихăçан та пĕлеймĕпĕр ĕнтĕ. НКВД следователĕсен хучĕсене тĕпе хурса çырнă статьяра /«Халăх тăшманĕсене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа çĕмĕрсе тăкар»/ И.Тăхти çинчен çапла каланă: «Тилĕ пек чеескер, кушак пек йăпăлтискер вăл «Шерхулла» калавсен кĕнекинче ĕлĕкхи чăваш ялне совет вăхăтĕнчи чăваш ялĕ туса кăтартать. «Нянине, паппине» «поэминче» фашистсем килесси çинчен тĕлленет, тăшман чĕлхипе чăваш халăхĕ çинчен, унăн çыруçисем çинчен тӳсме çук мăшкăлла чĕлхепе çырать. «Поэмăн» пайĕсене иртнĕ çулта пичетленĕскер юлашки пайне редакцирен илсе тухса тарма ĕлкĕрнĕ. Çапларах пытанса юлнă тепĕр тăшманăн сăнпичĕ».

Çакăн пек лару-тăрура çĕре кĕнĕ И.Тăхти.

Çыравçăн 1927 çулхи ака уйăхĕнче çырнă хучĕсен хушшинче *«чĕрĕ тип»* /живой тип/ тесе палăртни пур. Çав тип психологи тĕлĕшĕнчен кăна мар, пуплев-калу енчен те кăтартуллă пулма пултарать. И.Тăхтин стилĕ çырура та вăйлах палăрать. 1935 çулта «Колчак» кĕнеки тухсан çыравçă унти çитменлĕхсене асăрхаса вĕсем çинчен хаçат урлă пĕлтерме шухăш тытать. «Кĕнеке çырас ĕçе çыраканни витĕр чухлайман пирки, тĕрлĕ çĕрте авторăн тăн çитмен майĕпе, унта-кунта йăнăшсем пулнă вăл кĕнекере», – пуçлать И.Тăхти хăйĕн çырăвне. Редакци асăрхаттарăвĕ пирки çапла йĕплет вăл: «10-мĕш енче паллă туса çырни пур: «Качча кайнă хĕрĕн хăйматлăх ашшĕне ун упăшки вăртах тет» тенĕ. Хăйматлăхпа вăртах пĕр сăмах-ши вара?! Харпăр хăй сăн-пуçне çухатса, хăçан пĕр çĕре çăрăнса кайнă-ши вара вăл сăмахсем?! Çăмахпа пашалу иккĕш те пĕр япалахçке тенĕ пекле пулмас-ши апла вăл? Унашкал «чаплă сăмах-йăмаха» ăнланма хамăн та тăн çитеймес-çке те...» Ухмаха пени çеç мар кунта, ытларах кĕнекери ăнлантарăва çыраканĕнчен кулса тăрăхлани сисĕнет. Калавсенче те çаплах, ухмах супаканĕ пĕртен-пĕр калавçă кăна, авторĕ вара иронилет, калавçăн шухăшне пач хирĕçле çавăрса хурать.

«Парăм – 777 тенкĕ» калав /1931/ И.Тăхтин стилĕ аталанса пынине кăтартать. Унти калавçă юри ухмаха пемест темелле, вăл хăйне пачах та мĕскĕнлетмест. Пурнăçри пур ĕç-пуçа çавскер укçа çине куçарать, вăтăр çул хушшинче кама миçе тенкĕлĕх парăма кĕнине «учета илсех» шутлать. Авă амăшĕн варĕнче тăхăр уйăх пулнине те, хăйне сăпкара сиктерсе ăна чăрмантарнине те шута илнĕ ĕнтĕ калавçă. «Индивидуаллă пурнăçпа пурăнса пулнă парăмсем» тет вĕсене çак харкамçă. Халĕ парăмсен хуçи пĕрлешӳллĕ хуçалăха кĕнĕ, «малашне ман пурнăç та зажиточнăй пулать» тесе ĕмĕтленет вăл. Кунти автор иронийĕ харкамçă сăмахĕсене юрăхсăра кăларать. «Çав асăннă парăмсене пятилеткăра пара-пара татапах ĕнтĕ» тени вара *колхоз* ăнлава кăна мар, *пятилетка* сăмаха та йӳнетсе ярать, мĕншĕн тесен вĕсене пурнăçра юратупа тивĕç мĕн икенне чухламан чурăс чĕреллĕ этем пекки калать.

Хайлаври шухăш яланхи пекех темиçе сийлĕ пулса тухнă. Калавçа ансат ăнланаканшăн вăл çиелтех выртать. Тарăн шухăшĕ вара колхозсем йĕркеленĕ вăхăтри чĕрĕ типа кăтартнинчен йĕркеленет. Вăл юратусăр, парахатарсăр ывăл. Мĕн пурне укçа çине куçарса виçет тата хаклать. Шăпах ун йышшисем планпа /пилĕк, вунă çуллăхсемпе/ пурăнаççĕ те ĕнтĕ. Ку вăл текстран тухса, çав хушăрах хайлав авторĕн логикине аталантарса каланă шухăш.

■ **Виталий РОДИОНОВ,**
**филологи ăслăлăхĕсен докторĕ**

***Çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен "Хыпар" Издательство çурчĕн хаçачĕсене 2015 çулăн I çурри валли республикăри почта уйрăмĕсенче йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ. «Хыпар» – 732-66 тенкĕ, «Хыпар»- шăмат кун – 304-08 тенкĕ***

*Ас тăвăм*

# Фашистсен тылĕнче ĕçленĕ

***Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи тĕрлĕ пулăмпа пуян. Çапах та чи пултаруллă сценарист та çакнашкал сюжет шухăшласа тупаймасть пулĕ. Тăшман тылĕнчи совет госпиталĕ. Палатăсенче – аманнă хĕрлĕ армеецсем, вĕсене медиксем пăхаççĕ. Çуртран 30 метрта – Германи çарĕсем тытса илнĕ ялăн тĕп урамĕ. Аманнă пирĕн салтаксем пурте сывалнă, вăрçă хирне таврăннă.***

***Вăрттăн госпиталь Мускав облаçĕпе чикĕленнĕ çĕрти Передел салинче 1941-1942 çулсенчи хĕлле ĕçленĕ. Çакăн пирки Василий Глаголевран пĕлме май килчĕ. Унăн ашшĕ Передел больницине ертсе пынă, вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенче НКВД ăна «халăх тăшманĕ» тесе арестленĕ, больницăра ĕçлекенсем нимĕçсен сăмси айĕнчех аманнă пирĕн салтаксене çăлас ĕçе йĕркеленĕ.***



### *Арканнă эшелон пассажирĕсем*

Фашистсем паян-ыран Вязьмăна илме хатĕрленнĕ. 1941 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнче снарядсем çурăлнă май хуларан аманнисемпе пĕрле юлашки эшелона ăсатнă. 600 ытла çын пулнă, вĕсене Куйбышева илсе кайма хатĕрленнĕ. Анчах та Износки станцийĕ патĕнче пуйăс çине бомбăсем пăрахнă.

Аманнисенчен хăш-пĕрне çăлса хăварма пултарнă, эвакуацилеме хăтланнă. Юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнче 40-е яхăн çынна урапасем çине вырттарса Передела илсе пынă. Вĕсене ялти пĕчĕк сыватмăша вырнаçтарнă, каярах тухăçалла ăсатма йышăннă. Анчах та юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче ирхине ялта хăрушă хыпар пĕлнĕ: нимĕçсен малти чаçĕсем Передела халь-халь çитме пултараççĕ.

Аманнисене ăçта вырнаçтармалла-ха? Николай Глаголев тухтăра арестленĕ хыççăн сыватмăша 30 çулти тухтăр Анастасия Мельникова вăхăтлăха ертсе пынă. Ăна 21 çулти Нина Якимович фельдшер пулăшнă. Штатра тата темиçе медсестрапа санитарка пулнă. Шăпах çак хĕрарăмсем йĕркеленĕ те вăрттăн госпитале.

Хĕрлĕ армеецсен гимнастеркисене çунтарса янă, çапах та «ахаль мушиксен» пуля е ванчăк лекнипе пулнă суранĕсем пирки мĕн каласа ăнлантарăн? Медиксем фашистсем валли халап шухăшласа тупнă: çак çынсем – судпа айăпланнисем, хула çине бомбăсем пăрахма пуçласан тĕрмерен тарнă имĕш. Çул çинче тата «таркăнсене» хĕрлĕ армеецсем тесе нимĕç самолечĕсем пенĕ иккен. Гитлер çыннисем çӳресех ан кайччăр тесе стена çине «Typhos» тесе çырнă.

– Çапла чее хăтланни пулăшнă. Нимĕçсем больницăна пыман та темелле – тет В.Глаголев.

Салара нимĕçсем 100 кун хуçаланнă, госпиталь те çавăн чухлех ĕçленĕ. Сыватмăшра эмелсен саппасĕ пулнă, çыхмалли материалсем çитменнипе усă курнă бинтсене çунă, простыньсене хăю пек туса каснă.

Икĕ уйăхран сыватмăшри нӳхрепре çĕр улми саппасĕ пĕтнĕ. Вырăнта пурăнакансем пулăшнă.

– Кăштах самайланнă салтаксене вăрттăн вырăнта упраннă документсене панă, медиксем юрăхлăрах тумтир тупнă та фронт линийĕ урлă ăсатнă, – каласа кăтартать Василий Глаголев. – Çак вырăнсенчи партизансем пулăшнă.

1941 çулхи раштавра Хĕрлĕ Çар контрнаступление куçсан Переделти лару-тăру улшăннă. Те нимĕçсем фельдшерицăсем «шанчăксăррине» туйнă, те такам фрицсене медиксем партизансемпе çыхăну тытнине каласа кăтартнă... Гитлер çыннисем Анастасийăпа Нинăна килĕнченех илсе тухса персе вĕлерме ăсатнă. Тахçанах хупнă чиркӳ патĕнче вĕсене стена еннелле пăхса тăма хушнă, вĕсен патнелле пульăсем вĕçнĕ. Нина Якимович çапла аса илнĕ: «Эпир хăранипе ӳкрĕмĕр, нимĕçсем чăнах та лектернине пĕлме пырса та пăхмарĕç. Пире – тĕлĕнмелле те! – пĕр пуля та лекмерĕ!» Меллĕ самант тупăнсан вĕсем картишсем витĕр килĕсене кайнă. Нимĕн те пулман пекех кĕçех хăйсен госпитальне таврăннă.

1942 çул пуçламăшĕнче нимĕçсем ялти сыватмăша хăйсен аманнă салтакĕсене вырнаçтармалла тăвасшăн пулнă. Çакăн çинчен ялти староста пĕлнĕ те фельдшерицăсене асăрхаттарма васканă: сирĕн пата ыран аманнă фрицсене илсе пырĕç. Çак вăхăтра сыватмăшра пирĕн 13 салтак пулнă. Çĕрле вĕсене пурне те чиркӳн хурал пӳртне вăрттăн куçарнă.

### *Паттăрлăхшăн «халăх тăшманĕсем» пулса тăнă*

1942 çулхи кăрлачăн 23-мĕшĕнче Передела совет çарĕсем кĕнĕ. Хамăрăннисене курсан аманнисем хурал пӳртĕнчен аран-аран тухнă. Полк командирĕ Сергей Демяновский çапла аса илнĕ: «Тĕлĕнтĕм: пирĕн пата начарланса кайнă, бинтланă мушиксем чупса пычĕç...» Çак «мушиксенчен» вăл госпиталь историне пĕлнĕ, ун пирки дивизи командирне Боброва хыпарланă. Лешĕ çакнашкал тĕслĕх çинчен фронт командующине Жукова пĕлтернĕ, фельдшерицăсене «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăлама тăратасси çинчен каланă. «Çакнашкал паттăрлăхшăн медаль çеç сахал!» – хуравланă Жуков. Медиксене Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Анчах хĕрарăмсем хăйсене наградăлани çинчен пĕлмен. Яла ирĕке кăларсан темиçе кунранах медиксем патне «органсенчи юлташсем» пынă: оккупаци вăхăтĕнче нимĕçсем майлă мĕнле ĕçленине каласа кăтартăр-ха. Чекистсене вăрттăн госпитальти аманнисем пурте сывă юлни, медиксене фашистсем ярса тытманни иккĕлентернĕ.

«Тăшмана хирĕçле акцие» йĕркелекенсене айăплав кĕтнĕ. Мельниковăна арестленĕ, Медыне тĕрмене хупнă, суд туса 15 çула лагере ăсатма йышăннă. Якимовича НКВД çыннисем тупайман. Авари пулăшнă: шăпах çак вăхăтра вăл сыватмăш ĕçĕпе кӳршĕ яла кайнă, çул çинче ăна машина çапса хăварнă. Мускав хулин 1-мĕш больницинче сипленнĕ. Каярах Нина Александровна çар медикĕ пулнă, пирĕн çарпа Берлина çитнĕ. Мельникова та тĕрме пăттине нумай вăхăтах çимен.

1942 çулхи наградăсем хуçисене вăрах шыранă. Якимович Хĕрлĕ Çăлтăрне 70-мĕш çулсен пуçламăшĕнче кăна илнĕ. Мельникова хăйĕн орденне кĕтсе илеймен. Анастасия Нестеровна 1980 çулта вилнĕ.

■ **Александр ДОБРОВОЛЬСКИЙ.**
/«Московский комсомолец»/

# Куравра – вăрçă хатĕрĕсем, сăн ӳкерчĕкĕсем

***Çак кунсенче В.И.Чапаев музейĕнче «Пĕрремĕш тĕнче вăрçин фрончĕсенче» курав уçăлнă. Вăл асăннă вăрçă пуçланнăранпа 100 çул çитнине халалланă мероприятисен ярăмне малалла тăсать.***

Курава виçĕ пайран хатĕрленĕ. Пĕрремĕшĕнче Кăнтăр-хĕвел анăç фронтĕнчи сăн ӳкерчĕксем вырăн тупнă. Шăпах унта пирĕн ентеш, легендарлă начдив Василий Чапаев хăйĕн çар карьерине ахаль салтакран пуçланă. Çакă та пĕлтерĕшлĕ: Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче вăл фельдфебель ятне тивĕçнĕ, Георгий хĕресĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă.

Иккĕмĕш пайра республика çыннисем хăйсен несĕлĕсем – Пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăннисем – пирки çырса кăтартнисене вырнаçтарнă. Виççĕмĕшне вара В.В.Барышевăн коллекцийĕнчи / «Лавка старины» ООО/ эпир халĕччен илтмен ентешсен сăн ӳкерчĕкĕсенчен йĕркеленĕ.



Куравра çавăн пекех вырăс çарĕн хĕçпăшал тĕслĕхĕсемпе /вĕсене Чăваш наци музейĕн фончĕсенчен кăларнă/, тумĕсемпе /Чăваш Енри казаксен ентешлĕхĕ тивĕçтернĕ/ паллашма май пур.

**Н.СМИРНОВА.**

# «Сире пыл хурчĕ ан сăхтăр!»

Юлашки вăхăтра республикăра утарçăсен ĕç-хĕлне пысăк вырăн уйăрма пуçларĕç. Ялсенче хурт-хăмăрпа çыхăннă уявсене ытларах йĕркелесси те çавăнпах çыхăннă-тăр. Етĕрне районĕнчи Пушкăрт ял тăрăхне кĕрекен Çăкалăх çăка йышлă çитĕнекен вăрманпа юнашар вырнаçнă. Çавăнпа асăннă ялта пурăнакансенчен ытларахăшĕ утар тытать.

Çак кунсенче Çăкалăхсем «Сире пыл хурчĕ ан сăхтăр!» уяв ирттернĕ. Ăна виçĕ Сăпаса халалланă. Пыл хурчĕн кунне ялтисем кăна мар, кӳршĕ ялсенчи утарçăсем те пухăннă. Унта кашни хăйĕн пылĕпе пынă. Пухăннисене Пушкăрт ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Зинон Салтыков саламланă, «ылтăн хурта» хăйсемшĕн «ĕçлеттерекенсене» ăнăçупа çитĕнӳ, çирĕп сывлăх суннă. Уявра утарçăсене чысланă, викторинăсемпе конкурссем йĕркеленĕ. Пушкăрт культура çурчĕ çумĕнчи «Мерчен» фольклор ушкăнĕ, Шупашкартан килнĕ Сергеевсен дуэчĕ хăйсен юрри-ташшипе савăнтарнă. Леонид Ильин утарçă вара хăй çырнă сăввисене вуланă.

**А.МЕДОВАЯ.**



*Спорт фестивалĕ*

# Кире пуканĕ йăтакансем палăрнă

***Çурла уйăхĕн 22-25-мĕшĕсенче Чĕмпĕр облаçĕнче Олимп вăййисен программине кĕмен тата наци спорт енĕсен Пĕтĕм Раççейри I фестивалĕ иртнĕ. Шел те, пирĕн республикăри физкультурăпа спорт министерстви чылай енпе тулли команда тăратайман, çавна май Чăваш Ен спортсменĕсем нихăçанхинчен те япăхрах вырăн йышăнчĕç.***

Чушкăлла, лапталла, шашкăлла тата бильярдла вылясси чылай хула-районта иртнĕ ĕмĕр варринчех лайăх аталанма пуçланă. Шашкăлла выляссипе Вăрнар, Вăрмар, Тăвай, Шупашкар районĕсенчи тата республикăн тĕп хулинчи вун икĕ çын спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă. Çак норматива юлашки хĕрĕх çулта самбо енĕпе пурнăçланă атлетсен шучĕ çĕре çывхарать. Вĕсен ретĕнче çĕр-шыв чемпионĕсемпе пĕтĕм тĕнчери турнирсен çĕнтерӳçисем те пур. Анчах та чăваш йышлă пурăнакан Сенгилей хулинче тинтерех уçăлнă физкультурăпа спорт комплексĕнче иртнернĕ самбистсемпе шашистсен турнирĕсене пирĕн республикăран пурĕ те тăватă çын çеç хутшăннă.

Чĕмпĕрте иртнĕ кире пуканĕ йăтакансен турнирĕнче çирĕм икĕ регионти 130 ытла атлет вăй виçрĕ. Юлашки çулсенче тĕнче тата Европа чемпионачĕсенче темиçе хутчен çĕнтернĕ Челябинскри Иван Денисов, Омск облаçĕнчи Иван Мартыневичпа Ольга Яременко Пĕтĕм Раççейри I фестивальте те хăйсен виçисенче пĕрремĕш вырăн йышăнса ылтăн медале тивĕçрĕç. 85 килограмлă виçере ăмăртнă Липецк облаçĕнчи Елец хулинчи Раççей спорчĕн тава тивĕçлĕ мастерĕ, тĕнче рекордсменĕ Андрей Кравцов улттăмĕш вырăнпа çырлахрĕ. Ун хыççăн çиччĕмĕш вырăна Елчĕк районĕнчи спорт мастерĕ Дмитрий Ендеров йышăнчĕ.

Пирĕн республика чысне Йĕпреç районĕнчи Пучинкере çуралса ӳснĕ, тимĕр вăййипе çак ялти физкультура коллективĕн ертӳçи, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ Михаил Петров тăрăшнипе туслашнă Джанита Щербина /Павлова/ тата Санкт-Петербургри çар физкультура институчĕн курсанчĕ Марина Федорова уйрăмах лайăх хӳтĕлерĕç. Вĕсем иккĕшĕ те юлашки пилĕк çулта «Хыпар» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн иртгернĕ Пĕтĕм Раççейри турнирсенче темиçе хутчен çĕнтернĕ. Пĕлтĕр Чĕмпĕрти тĕнче спорт мастерне Олег Щербина качча кайнă чăваш пики Джанита 58 килограмлă виçере ăмăртса Омскри тĕнче рекордсменне Ольга Яременкăна тата Челябинскри спорт мастерне Ирина Мякишевăна кăна выляса ячĕ, виççĕмĕш вырăна тухрĕ.



● ***Вера Николаева.*** /«Хыпар» архивĕнчи сăн ӳкерчĕк/.

Хĕрарăмсен чи çăмăл виçе категорийĕнче Чăваш ял хуçалăх академийĕн студентки, Пĕтĕм Раççейри ял спорт вăййисен призерĕ Вера Николаева та палăрчĕ. Унăн – улттăмĕш кăтарту.

68 килограмлă виçере Чăваш Ен чысне Канаш хулинчи паллă педагог тата ăста спортсменка, тăвата ача амăшĕ Алевтина Евграфова ăнăçлă хӳтĕлерĕ, çиччĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Пучинке пики, юниоркăсен хушшинче тĕнче чемпионки Марина Федорова çивĕч кĕрешӳре 68 килограмран йывăртарах виçере ăмăртса Джанита пекех виççĕмĕш вырăна тухрĕ, бронза медале тивĕçрĕ.

Кире пуканĕ йăтаканĕсен турнирĕнче пуринчен те нумайрах очко пухса Челябинск облаçĕн атлечĕсем мала тухрĕç. 2-6-мĕш вырăнсенче – Омск облаçĕн, Краснодар крайĕн, Чăваш Республикин, Пермь крайĕн тата Чĕмпĕр облаçĕн командисем.



● ***Марина Федорова.*** /«Хыпар» архивĕнчи сăн ӳкерчĕк/.

■ **Петр СИДОРОВ, Пĕтĕм Раççей категориллĕ судья**

*Апачĕ тутлă пултăр*

## Сахăрланă пан улми

Чылайăшĕн кăçал пан улми ăнса пулчĕ. Хĕл кунĕсем валли варени хатĕрленисĕр, типĕтнисĕр пуçне унран тата мĕн янтăлама пулать?

Кил хуçи хĕрарăмĕсен шухăшĕпе – сахăрланă пан улми, урăхла каласан – цукат. Ăна валли пылак е кăвасак туталлă, çемçе тата хытă пан улмие çуса тасатмалла, варрине кăларса пĕр сантиметр хулăнăш тăрăхсем туса касмалла, вĕри шывра 1-2 минут тытмалла /пиçсе кайиччен мар, кăшт çемçеличчен/. Унашкал касăк сахăр шывне кирлĕ чухлех сăхса илет.



Сахăр сиропне хатĕрлеме ансат: пĕр килограмм песука пĕр стакан шыв хушса майĕпен пăтратса вĕреме кĕртмелле. Сиропа хĕрлĕ кăшман сĕткенне пĕр кашăк яма юрать – хатĕр цуката шупка тĕс çапать. Вĕрекен шывра касăксене 2 минут тытмалла /çак хушăра пан улми витĕр курăнакан пулать/ та шумовкăпа кăларса илмелле, шăтăклă куркана ярса сăрхăнтармалла, сивĕтмелле, типĕтмелле /кун пек чухне электричество вăйĕпе ĕçлекен ятарлă хатĕр е кăштах вĕрилентернĕ духовка меллĕ/.

## Кавăнран – варени



Ытлашши виçерен хăтăлас текенсене специалистсем кавăн çиме сĕнеççĕ: чĕрĕлле те, унран ятарлă çимĕç янтăласа та. Вăл апата ирĕлтерме тӳрременех хутшăнать, начарланма пулăшать, апат хуранĕн ĕçне лайăхлатать.

0,5 килограмм кавăн, 600-650 грамм сахăр, 1 лимон е апельсин кирлĕ. Çимĕçсене аш арманĕпе вĕтетмелле, сахăр хушмалла, лайăх хутăштармалла. Таса савăта тултарса сивĕтмĕшре упрамалла.

Кунашкал варение чылайăшĕ кăмăллать, кавăн сарă тĕслĕ пулсан кăмăл татах çĕкленет. Ăна лимон хушса хĕл кунĕнче те янтăлама юрать.

Тепĕр тĕрлĕ варение «Златовласка» сортлă кавăнран хатĕрлеме сĕнетпĕр: 3 килограмм çимĕçе, 0,5 килограмм шăмăсăр типĕтнĕ абрикоса /курагана/ хутăштармалла, 1 килограмм сахăр ярса 45 минут пĕçермелле: вĕреме кĕриччен вăйлă çулăм çинче тытмалла, унтан вăйсăрлатмалла. Пиçсе çитиччен 15 минут маларах лимон е апельсин /аш арманĕпе вĕтетсе/ хушмалла. Хатĕр варение таса савăта тултарса хупламалла, сивĕ вырăна лартмалла.

## Пиç, пиç, палан...

Кĕçех палан пиçсе çитет. Апла тăк унран хĕл кунĕсем валли тутлă та сиплĕ çимĕç хатĕрлеме ан манăр.

Сапакасен çырлисене иртмелле. Çуса тасатнă хыççăн вĕсене алăпа сĕткен тухиччен лутăркамалла /ятарлă хатĕр витĕр кăларма кансĕр – вăрри тулса ларать/. Сĕткене кантăк савăта çурри таран тултармалла, пĕрре-тăваттăмĕш пайĕ чухлĕ темиçе ăстрăмпа сахăр хушмалла. Çĕр улми тӳмелли тукмакпа /йывăçран туни мар, кухньăра усă курмалли хатĕрсен ятарлă пуххинчи/ сахăрпа сĕткен пĕрлешсе çăра хутăш пуличчен майĕпен пăтратмалла. Ун хыççăн сиропа савăта тултарса капрон виткĕчпе хупламалла, сивĕ вырăна лартмалла. Палан сĕткенĕпе сахăртан хатĕрленĕ желе тути хăйне евĕр – йӳçĕкрех, хĕл кунĕсем валли янтăланă уйрăмах тутлă пылак çимĕç шутланать вăл. Ăна çитĕннисем кăна мар, ачасем те юратса çиеççĕ.



Çырла юлашкийĕпе те усă курма юрать: пĕр стакан сахăр тата çур стакан шыв хушса вĕретмелле, кантăк савăта пырĕ таран тултармалла, унтан шурă эрех ямалла – 3-4 уйăхран çырла эрехĕ хатĕр. Вăл чаплă кăна мар, сиплĕ те, çавна май пĕчĕккĕн ĕçсен усса каять.

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Ядринская районная администрация сообщает, что по результатам открытого аукциона по продаже и предоставлению в аренду земельных участков, проведенного 26.08.2014г., в 10-00 победителем признан следующий участник:
Лот 1. В собственность за плату для ведения сельскохозяйственного производства, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Большесундырское, с кадастровым номером 21:24:180302:557, площадью 22000 кв.м.; цена установленная торгами 18018 руб.; победитель - Филиппов К.Н.

Администрация Аликовского района Чувашской Республики **"26" сентября 2014 года в 10.00 часов** объявляет торги (открытый аукцион) по продаже права на заключение договора аренды земельных участков без обременения:
**Характеристика объекта права на заключение договоров аренды земельных участков:**
**лот № 9** - земельный участок с кадастровым номером 21:07:081101:59, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Таутовское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 25289 кв.м. **Начальная (стартовая аукционная) цена участка** - 4904 (Четыре тысячи девятьсот четыре) рубля 00 копеек.
**Сумма задатка** - 100% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.
**Шаг аукциона** - 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.
**лот № 10** - земельный участок с кадастровым номером 21:07:081101:60, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Таутовское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 29435 кв.м. **Начальная (стартовая аукционная) цена участка** - 5707 (Пять тысяч семьсот семь) рублей 00 копеек.
**Сумма задатка** - 100% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.
**Шаг аукциона** - 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.
Заявки на участие в аукционе принимаются до 10.00 часов 23.09.2014 г.
За справками и информацией обращаться в отдел экономики, земельных и имущественных отношений администрации Аликовского района в каб. №48 и на сайте администрации района www.alikov.cap.ru (баннер - "Объявления").

ИЗВЕЩЕНИЕ
Администрация Батыревского района Чувашской Республики проводит 06 октября 2014 года в 14.00 часов по московскому времени аукцион, по открытой форме подачи заявок и предложений о цене по продаже земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:08:340108:42 площадью 3543 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос. для сельскохозяйственного производства, начальная цена 19000 руб., шаг аукциона 5%, задаток 20%.
Заявки принимаются с 01 сентября по 30 сентября 2014 года по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5, каб. №7. По вопросам проведения аукциона, оформления заявок и перечисления задатков обращаться по тел.: (83532)6-14-26 или ознакомиться на сайте www.torgi.gov.ru.

Администрация Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики (организатор торгов) сообщает о внесении следующих изменений в объявление о проведении аукциона, опубликованного в № 162 от 20.08.2014 г.:
Аукцион состоится 26 сентября 2014 г. Заявки на участие в аукционе принимаются с 27 августа 2014 г. по 22 сентября 2014 г. Задаток необходимо перечислить не позднее 22 сентября 2014 г.

**ПРОДАЮ**

**7. Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**62.Гравмассу,** песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89053465671.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче ĕçлекенсем В.Н.Шашков тăлмачăн мăшăрĕ

**Альбина Васильевна ШАШКОВА**

сарăмсăр вилнĕ пирки ĕçтеш çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор–тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь–техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Р.А.ВЛАСОВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 26.08.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7411. Заказ 3181.